Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 54 (4623) *1998 çулхи май (çу) уйăхĕн 15-мĕшĕ, эрнекун* *Палăртнă хакпа.*

## Юбилей хыççăн

***Тутарстан Республикин социаллă тивĕçтерӳ министерстви - Нурлат районĕпе Нурлат хула администрацийĕн пуçлăхне.***

Хисеплĕ Фатих Саубанович! 1998 çулта çĕршыв халăхне социалла тивĕçтерекен тата социалла хӳтĕлекен отрасль 80 çул тултарчĕ.

Эсир тăрăшнипе районта граждансене социаллă пулăшу паракан система йĕркелеме тата социаллă тивĕçтерӳ учрежденийĕсене аталантарма чылай ĕç пурнăçланă. Районти социаллă хӳтлĕх пайĕн коллективĕ халăх хушшинчи социаллă йывăрлăхсене çăмăллатма пысăк тĕллевлĕ ĕç илсе пырать, республикăра чи лайăххисенчен пĕри шутланать.

Сире тата социаллă хӳтлĕхпе социаллă тивĕçтерӳ пайĕн ертӳçисене çынсен кулленхи ыйтăвĕсене пĕлсе, комплекслă татса пама тăрăшнăшăн чĕререн тав тăватăп.

Эсир малашне те çынсене пулăшасса, тимлĕх уйăрасса çирĕп шанатăп.

Сире çирĕп сывлăх, пысăк телей, иксĕлми вăй-хăват, тăван республикăна малалла аталантарас ĕçре творчествăпа ăнăçусем сунатăп.

**Сире хисеплесе К.Н.НОВИКОВА министр.**

## КУН хыççăн КУН: Хроника Событисем Фактсем



*Паллашăр: ӳкерчĕкре хресченсен хуçалăхĕсен "Урняк" ассоциацийĕн ĕçченĕ Федор Александрович Кончев. Опытлă механизатор, вăл хĕл тăршшĕпех ферма ...льăхсем валли апат ...рттарать, вутă хатĕрлет, çурхи ăшă кунсем пуçлансан вара хăйĕн тракторне хире илсе тухать. ДТ-75 тракторĕ çумне акакан агрегат çаклатса кашни çул акана активлă хутшăнать, мĕнпур ĕçе яваплăх туйса пурнăçлать.*

*Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕ.*

## Çуллахи кану çинчен çуркунне шухăшламалла

Ытларикун "Тутарстан хĕрарăмĕсем" союзăн район организацийĕн Совечĕн черетлĕ ларăвĕ, ачасен çуллахи канăвне хатĕрлесси мĕнле пынине сӳтсе явнăскер, иртрĕ. Унта РОО методисчĕ Г.Д.Аглиуллина тухса каласрĕ. Пĕчĕк тупăш илекен çемьесенчи ачасем валли усă курнă япаласем пуçтарасси çинчен общественноçа чĕнсе калама йышăннă.

## Пирĕннисем палăрнă

Нурлатри 3-мĕш номерлĕ вырăс-тутар ...кул-гимназийĕн учительници Татьяна Ивановна Чибидина хушма вĕренӳ тĕлĕшпе автор ĕçне тăратассипе республикăра ирттернĕ конкурса хутшăннă та хăйĕн ĕçĕшĕн Хисеп грамоти илме тивĕç пулнă.

* * *

Пирĕн районти тата хулари шкулсенчи пултарулăх артисчĕсем Чистай хулинче иртнĕ республикăри фестивалĕн II турĕнче лауреатсен ятне çĕнсе илнĕ.

## ИКШЕР НОРМА ПУРНĂÇЛАÇÇĔ

Хресченсен хуçалăхĕсен "Комбайн" ассоциацийĕнчи **Радик Мангирович МИНГАЗЕТДИНОВ** ДТ-75 агрегатпа 50 гектар çине тулă акса, смена нормине 212 процент пурнăçланă.

* * *

Сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕнчи **Владимир Геннадьевич ИВАНОВ** та çавăн чухлех лаптăк çинче ĕç пурнăçласа, кунне икĕ норма ытла тунă.

Çак хуçалăхри иккĕмĕш кооперативра вăй хуракан **Виталий Петрович БОГДАНОВ** та смена нормине 183 процент пурнăçланă.

Хресченсен хуçалăхĕсен "Тĕрнеç" ассоциацийĕнчи Рафаэль Ильясович Вахитов 40 гектар çине урпа акса, смена нормине 166 процент пурнăçланă.

* * *

Хресченсен хуçалăхĕсен "Игенче" ассоциацийĕнчи **Асхат Загидуллович ЗАЙНУЛЛИН** тăпрана акма хатĕрленĕ çĕрте кунне норма çурă ĕç тăвать.

## Кам мĕн чухлĕ сĕт сутнă?

***Цифрăсен пĕрремĕш графи - 4 уйăх хушшинче сĕт сутнă, иккĕмĕшĕ - сĕт сунă ( пĕр ĕне пуçне куçарса шутласан, килогрампа), виççĕмĕшĕ - сĕт таварлăхĕ (процентпа).***

| | | | |
|---|---|---|---|
| "Дуслык" | 1864 | 2154 | 87 |
| "Кондурча" | 1682 | 1975 | 85 |
| Мичурин яч.хис. | 1287 | 1594 | 81 |
| Синдряков яч.хис. | 1209 | 1391 | 87 |
| "Сĕнче" | 1194 | 1462 | 82 |
| "Родина" | 1068 | 1261 | 85 |
| "Киклĕ" | 1029 | 1179 | 87 |
| Сахăр завочĕн х/х | 1026 | 1236 | 83 |
| "Татарстан" | 972 | 1112 | 87 |
| Хафизов яч.хис. | 943 | 1172 | 81 |
| "Тĕрнеç" | 912 | 1051 | 87 |
| "Çуткӳл" | 888 | 1200 | 74 |
| "Черемшан" | 757 | 1065 | 71 |
| РСУн х/х | 737 | 933 | 79 |
| Кузнецов яч.хис. | 716 | 885 | 81 |
| "Чулпан" | 704 | 862 | 82 |
| М.Джалиль яч.хис. | 704 | 1003 | 70 |
| "Заря" | 684 | 822 | 83 |
| "Заветы Ильича" | 683 | 990 | 69 |
| "Игенче" | 626 | 763 | 82 |
| "Алга" | 565 | 716 | 79 |
| "Комбайн" | 554 | 646 | 86 |
| "Рассвет" | 534 | 1382 | 39 |
| "Урняк" | 530 | 730 | 73 |
| "Москва" -2 | 517 | 839 | 62 |
| "Москва" -3 | 517 | 819 | 63 |
| "Тан" | 484 | 660 | 73 |
| "Элмет" | 473 | 710 | 67 |
| "Строитель" | 431 | 714 | 60 |
| Нефтебазăн х/х | 324 | 622 | 52 |
| "Каенлык" | 157 | 428 | 37 |
| **Район тăрăх** | **801** | **1028** | **78** |

**Асăрхаттарни:** **Кунта урăх каналсемпе сутнă сĕтĕн виçине шута илмен. "Каенлык" кооператив патшалăха сутнă сĕт сведенийĕсене юлашки уйăхшăн çеç панă.**

### Пĕр хуçалăхран килнĕ хыпарсем

## Районта пĕрремĕшĕ

Маларахри çулсенче районти хуçалăхсенче ку агрегата курма мар, вăл шухăшра та пулман. Анчах кăçал хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче хатĕрлĕх линейки çинче çак поход компрессорне те курма май пулчĕ. Кунта трактор паркĕн заведующийĕн Александр Прохорович Кириллован рационализаци пултарулăхĕ палăрчĕ. Çак ĕçре вара ăна Валерий Хвалеев сварщик, Иван Гаврилов токарь, Валерий Захаров тимĕрçĕ пулăшрĕç.

Çак агрегата майласа яма кăткăс мар. Вăл пропан баллонĕнчен тăрать, малта горизонталлĕ майпа компрессора пĕр тĕнĕллĕ тележка çине вырнаçтарнă. Унпа хуçалăхра çураки тапхăрĕнче усă курма меллĕ. Апрель уйăхĕн вĕçĕнче бригадăсем хушшинчи тĕрĕслевсем иртрĕç, виçĕ бригадăран иккĕмĕшĕ пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Мала тухма компрессор пулăшрĕ пулĕ, тесе шӳтлеççĕ механизаторсем.

**А.КИРИЛЛОВ,**
**пенсионер.**

## Хирте те, ялта та йĕрке

Сăмах хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕ çинчен пырать. Çуркунне пуçланнă пуçланман хирсен хĕррисене тасатнă, йĕркене кĕртнĕ, юпасене шуратнă. Ял хуçалăх культурисем те çулталăк тăршшĕпех йĕркеллĕ пулласса шанма пулать. Хуçа пурри ялта та туйăнать. Вăтам Хăмăшлăри тĕп урамра шлагбаум вырнаçнаçтарнă, пысăк тиевлĕ машинăсен кĕме юрамасть. Урамăн икĕ енĕпе те сип-симĕс курăк ешерет. Шкулăн çĕнĕ карти те урама илемлетет, халь вара шкула хирĕç вырнаçнă çуртсенче пурăнакансем те хăйсен картисене çĕнетме шутлаççĕ. Çурхи уява кунта çавăн пек йĕркелĕхпе кĕтсе илнĕ.

## *МАЛТА ПЫРАКАН ВАХТА*

Джалиль Мустафинăн бригади тулли мар явап тытакан "Нурлатнефтешырав" обществăра чăннипех чи лайăххисенчен пĕри шутланать. Хальхи вăхăтра вăл нефтьпе пуян вырăнта - Пионерскире пăралать. Апрель уйăхĕнче пирĕн 800 метр пăраламаллаччĕ, эпир вара 1090 метр пăраласа, плана ирттерсе пурнăçларăмăр. Кунта Анатолий Атаманов, Александр Гордеев пăралуçăсем тата пăралуçăсене пулăшакансем Ильдар Яруллин, Набиулла Ишниязов, Фарит Хасаншин уйрăмах тăрăшса вăй хучĕç. Владимир Александров электрикпа Камиль Давлетшин слесарь та пĕрлехи ĕçе пысăк тӳпе кĕртеççĕ.

Бригада тунă ăнаçлăхпа кăна лăпланса лармасть, пăралу ĕçне хăвăртлатнăçемĕн хăвăртлатать.

Р.РАХМАТУЛЛИН.

## *Дизель оборудованийĕн мастерĕ*



*Ку тивĕç Сергей Иванович Ефремова питĕ яваплă пулма хистет. Напряжени çуккипе лини çинче çутă сӳнсен вăл дизель генераторне хăвăрт хускатса ярса, поездсене чарăнмасăр çӳрессине тивĕçтермелле. Çакăн пек генераторсем Глотовка, Шентала, Нурлат станцийĕсенче пур, вĕсем юсавлă пулнăшăн Ефремов мастер яваплă. Уйăхне пĕрре вăл хăйĕн хуçалăхне тĕплĕн тĕрĕслет, вĕсем кирлĕ чухне ялан хатĕр пулчăр тесе тăрăшать.*

*Электростанцире 10 çул вăй хунă вăхăтра Сергей Иванович хăйĕн ĕçĕн профессионалĕ тата улăштарма çук çын пулса тăнă. Çавăнпа та тĕп ĕçĕсĕр пуçне ăна электростанци тивĕçтерекен Погрузная тата Шентала станцийĕсем хушшинче пулакан аварисене пĕтерме те тухса кайма тивет. Сергей Иванович нихăçан та хирĕçлемест, пĕтĕм пĕлĕвĕпе вăйне ĕçе халаллать.*

*Ӳкерчĕкре: электростанци мастерĕ С.И.Ефремов.*

## Пĕр кунра - икĕ уяв

Кульбаево-Мараса ялĕнчи Г.Кариев ячĕпе хисепленекен музейра ĕçлекенсем иккĕмĕш уява вăтам шкул коллективĕпе пĕрле ирттерчĕç. Ку вăл тутар театрне пуçласа яракансенчен пĕри Габдулла Кариев çуралнăранпа 112 çул çитнине халалланă уявчĕ. Çĕнтерӳ кунне халалласа митинг ирттернĕ хыççăн ял çыннисем ялти культура çуртне васкарĕç.

Уява музей директорĕ Г.С.Садретдинова ертсе пычĕ. Вăтам шкул учительници И.Ибрагимова тухса каласнă хыççăн пирĕн мухтавлă ентешĕн пурнăçĕпе тата творчествипе çыхăннă тĕрлĕ эпизодсем кăтартрĕç. Çапла, Р.Давлетбаев, Р.Ногуманов, М.Садретдинов, Р.Галиуллина Г.Кариевăн "Артист" тата Г.Камалăн "Пĕрремĕш театр" ("Первый театр") спектаклĕсенчи сыпăксене кăтартрĕç. Çаплах сцена çинчен Г.Кариева халалланă сăвăсем илтĕнчĕç. Р.Шакировапа Р.Давлетбаев артистăн тата режиссерăн пурнăçĕсенчи паллă мар страницисене уçса пачĕç. Ялти поэтсем Шакирзян Шайхиевпа Расима Галимова тата Разина Гайнуллина паллă ентеше халалланă хăйсен сăввисене вуларĕç.

*Ĕнерхи почтăран*

## Çĕнтерӳ кунĕ - ялсенче

**ÇĔНĔ АМЗЯ**. Нумаях пулмасть-ха ял Совечĕн территорийĕнче 200 яхăн ветеран шутланатчĕ, анчах та çулсем хĕрхенӳсĕр çав, кăçалхи уява пурĕ те 20 çын кăна килчĕ. Митингра тухса каласнă хуçалăх председателĕ Д.Фассахов, ялти мулла С.Фассахов, А.Фассахов учитель пуçтарăннисене çапăçу хирĕсенчен таврăнайманнисене тата фронтри суранĕсене пула килĕсенче вилнисене ĕмĕр-ĕмĕр асра тытма, мире хаклама чĕнсе ларĕç. Г.Набиуллина "Песнь матери" сăвва вуланине никам та куççульсĕр итлеймерĕ. Ял çыннисем палăк умне чечексем хучĕç, кайран вара ветерансем шкула кайрĕç, унта вĕсене уяв ячĕпе хатĕрленĕ сĕтелсем кĕтрĕç.

С.ФАСХУТДИНОВА.

**СИРĔКЛĔ.** Çĕнтерӳ кунне халалланă митинга ялти мулла Хасибулла Мотыгуллин уçрĕ. Ял Совечĕн председателĕ саламлани, шкулта вĕренекенсен вăйĕпе хатĕрленĕ концерт, уяв сĕтелĕ тата парнесемлĕ пакетсем те ветерансене килĕшрĕç. Каçхине вара ял çыннисем Çирĕклĕ тата Хиртикӳл ялĕсенчи пултарулăх артисчĕсен концертне курчĕç. Икĕ ялти çамрăксем тахçантанпах туслă пурăнаççĕ, вĕсем çак ялсен халăхне хăйсен юррисемпе савăнтараççĕ. Акă уяв кунĕ те вĕсем ял çыннисене хăйсен юррисемпе ташшисене сĕнчĕç.

Р.ХАМЗИН.

Сăмахсем те, туйăмсем те пĕр пек Кукăркӳл ялĕнче майăн 9-мĕшĕнче Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 53 çул çитнине халалланă митинга ватти-вĕтти пурте пуçтарăннăччĕ. Уява шкул директорĕ В.К.Зайнутдинов уçрĕ. Кайран ял Совечĕн председателĕ Р.Р.Калимуллин хресченсен хуçалăхĕсен "Черемшан" ассоциацийĕн ертӳçин тата ял Совечĕ ятĕнчен тухса каласса, вăрçă ветеранĕсене тата тăлăха юлнă салтак арăмĕсене уяв ячĕпе саламларĕ. Шкул директорĕн воспитани парас тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕ Р.Халиуллина ветерансен речĕ çулсерен сайрални çинчен, вĕсене асăнса пĕр минут чĕнмесĕр тăма чĕнсе ларĕ.

Митинг пынă май литературăпа музыка монтажĕ пулчĕ. Çапла, ачаранах инвалид, пĕчĕккĕллех ашшĕне çухатнă Райхана Халиуллина тухса каласни пурне те хумхантарчĕ. Хади Исхаков ватăсене тимлĕх уйăрнăшăн хальхи ăру представителĕсене ветерансен ятĕнчен тав турĕ. Митинг ялти çамрăксен, шкулти пултарулăх артисчĕсен вăйĕпе хатĕрленĕ концертпа вĕçленчĕ.

Хуçалăх ертӳçи Х.Ш.Шамсуаров хутшăннипе Гайтан ялĕнче те çавăн пек митинг иртрĕ. Кайран икĕ ял ветеранĕсем пĕр сĕтел хушшине пуçтарăнчĕç, унта вĕсем иртнине аса илчĕç.

Д.ШАКИРОВ.
Кукăркӳл ялĕ.

*Ака-98*

## Ĕçе пуçлама анчах йывăр

Апрель уйăхĕн пуçламăшĕнче техника çурхи ĕçсем тĕлне хатĕрлес тĕлĕшпе иртгернĕ тĕрĕслев хуçалăхри лару-тăрăва чăннипех кăтартнă хыççăн Кукăркӳлĕнчи ĕçченсем хумханчĕç, ĕçсем чăннипех те лайăхах марччĕ. Ял хуçалăх техникинетĕрĕслессине çапла иртерех срока палăртни кăна хăтарнă. Унтан çĕнĕ шефсем - маркетинг департаменчĕн ертӳçисем хуçалăхăн çĕнĕ председателĕпе пĕрле механизаторсене пуçтарса ĕçсем мĕнле кăткăс пулнине ăнлантарса панă. Запас пайсем туянма та департамент нумай пулăшнă. Хальхи вăхăтра бригадăри гусеницăллă 8 трактор та хирте.

Çуркуннехи кун питĕ улшăнуллă: хĕвел ялтăртатса пăхнă çĕртех таçтан хура пĕлĕтсем килсе тухаççĕ те витререн тенĕ пек çумăр ярать.

- Паян пиллĕкмĕш хут ĕнтĕ, - тет хресченсен хуçалăхĕсен "Черемшан" ассоциацийĕн агрономĕ Мубаркзян Галимов. - Çапах никам та хиртен каймасть: кăшт типет те ĕçе пуçăнаççĕ. Анчах та хăвăртлăх çук ĕнтĕ.

Агроном пĕлтĕр сахăр кăшманĕ акса ӳстернĕ 156 гектар лаптăк çинчен каласа парать. Ку участок çине Юнус Фасхутдинов, Рифкат Фасхиев, Фоат Галиахметов хăйсен агрегачĕсемпе пĕрремĕшсем пулса нӳрĕк тытнă. Унтан вара 75 гектар çине сенажлăх пăрçа акнă. Ю.Фасхутдиновпа Х.Садыков икĕ сменăпа акнă. Халь акă вĕсем пĕр çул ӳсекен курăксем - викăпа сĕлĕ хутăшĕ акаççĕ. Вĕсем хыççăнах Азат Валиахметовпа Анас Зайнутдинов тăпрана пусăрăнтараççĕ. Рафис Садыкова, Ильхам Хасанзяновпа Фоат Валиахметова вара сӳрелеме хушнă. Механизаторсем кунĕпе тенĕ пекех хирте: тракторсем валли горючи те кунтах илсе килеççĕ, вĕри апат та кунтах йĕркелеççĕ. Вăрлăхпа, удобренипе те кал-кал тивĕçтереççĕ. Вăрлăха, паллах ĕнтĕ, инкрустациленĕ. Р.Ахунзянов машинист ертсе пынипе Резеда Садыковапа Любовь Гатауллина вăрлăха имçамлаççĕ. Удобренисем пирки каласан, вĕсем кунта çителĕклĕ, ăна халь те турттараççĕ. Калчасене районти ытти хуçалăхсенчен кая мар апатлантарасшăн.

- Пире удобренисем тата кирлĕ пулаççĕ-ха, кĕрхи культурăсене апатлантарма кăна мĕн чухлĕ кирлĕ. Халь акă шăпах çак агромероприятие пурнăçлаççĕ тата хушса урпа акаççĕ. Çак участоксенче пĕчĕк кӳлĕсем пулса кайни те хуçасене хумхантарать: участокăн пĕр пайне çĕнĕрен акма тӳр килет, çакăн пек шыв илнĕ вырăнсене ытти хирсенче те курма пулать.

Çĕр пĕр харăс ĕлкĕрсе çитменнипе участоксене суйласа ĕçлеме тӳр килет. Юханшывăн тепĕр енчи хирсене, пĕлтĕр вĕсемпе пĕрлештернĕ гайтансен 273 гектарĕ çине тухма çук-ха. Анчах та çĕр ĕçченĕсем алă усса лармаççĕ, урăхла май та çук: çурхи тулă кăна 400 гектар акмалла, сахăр кăшманĕ хуçалăхра пурĕ - 300 гектар. Çак культура кăçал пĕрремĕш хут француз-сен технологийĕпе акасшăн. Пĕлтĕр "Мультикорн" сеялка Гайтан бригадинче хăйне лайăх енчен çеç кăтартрĕ.

Акана хăйсен механизаторĕсем çеç хутшăнаççĕ. Ĕçсен пысăк калăпăшĕ Юнус Фасхутдинов, Халиулла Садыков, Рияз Гилязев механизаторсене тивет. Тăрăшуллă çĕр ĕçченĕсем канупа ыйхă çинчен манса вăй хураççĕ. Опытлă механизаторсем çак çĕр çинче ӳсse çитĕнсе кунтах ĕçлеме пуçăнса тырпул ӳстерекенĕн хисеплĕ ятне тивĕçнĕ. Çавăнпа та кăçалхи кăткăс çулхи акана та вĕсем йĕркеллĕ ирттерсе кĕркунне вара пуян тухăç пуçтарасса шанма пулать.

С.ХАЙРУЛЛИНА.

**Улах юррисем**

# Савни лайăх тесе ан мухтанăр

Сарă пурçăн тутăр, пĕр панулми
Эрне çурă выртрĕ арчара.
Хамăн савнă туса кĕте-кĕте
Уйăх çурă лартăм улахра.

Сар тутрăр саррипе ан мухтанăр,
Тĕс каяс вăхăчĕ çитĕ-ха.
Савни лайăх тесе ан мухтанăр,
Пăрахас вăхăчĕ çитĕ-ха.

Кăрымски çĕлĕк вĕтĕ кăтра
Пасарсенче урăх пулминччĕ.
Ху тусна пăрахса юта савсан
Тусу пекки урăх пулминччĕ.

Урамăрсем тăвăр, кукăр-макăр,
Кукрисерен улма йывăççи.
Улма йывăççийĕн туратти çук,
Сар кайăка ларма вырăн çук.
Чунăм савни мана пăрахнипе
Ура çине тăма халăм çук.

Çарăмсанăн кукри çичĕ кукăр-
Çиччĕ çаврăнасси час пулмĕ.
Кунтан пĕр уйрăлса, ай, кайсассăн,
Курса калаçасси час пулмĕ.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**



# Пĕлтерӳсем

*Пахчаçăсен "Локомотив" юлташлăхĕнче дача участокĕ сутăнать. Телефон: 5-23-27.*

* * *

*"Москвич-2140" васкавлă сутăнать, хаклă мар. Тĕрнеç ялĕнчи Рафик Бильдановран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Пахчаçăсен "Дубрава" юлташлăхĕнче дача васкавлă сутăнать. Телефон: 5-28-08.*

* * *

*Хула варринче хуралтăсемлĕ çурт сутăнать, газпа ăшăтмалла. Адрес: Мичурин урамĕ,2.*

* * *

*Стенка сутăнать. Телефонсем: 5-42-54 (ĕçри), 2-14-27 (килти).*

* * *

*1992 çулта туса кăларнă ВАЗ-21061 сутăнать, 5 сыпăклă КПП, хакĕ 20 пин тенкĕ. Кивĕ Чаллăри Вячеслав Итринран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Нурлатри ăшă сечĕсене ĕçлеме каменщиксем тата газоэлектросварщиксем васкавлă кирлĕ. 2-15-54 номерлĕ телефонпа е кадр пайĕнче ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Бортлă УАЗ сутатпăр. Телефон: 5-25-76.*

* * *

*1994 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутатпăр. 5-28-45 номерлĕ телефонпа 18 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*Вĕлле хурчĕсем сутатпăр. Адрес: Школьная урамĕ, 39.*

* * *

*Лайăх шайри "Запорожец" тата çĕнĕ "Муравей" мотороллер сутатпăр, хаклă мар. 2-13-94 номерлĕ телефонпа 17.00 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*Пахчаçăсен "Агрохимик" юлташлăхĕнче дача сутăнать. Адрес: 2-ая Дачная урамĕ, 15-2, телефон: 2-24-29 (килти).*

* * *

*Приватизацилемен 2 пӳлĕмлĕ хваттере приватизацилемен икĕ пĕр пӳлĕмлĕ хваттерсемпе хушса тӳлесе васкавлă улăштаратпăр. Адрес: Гагарин урамĕ, 28-12. 2-25-27 номерлĕ телефонпа 20 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*Усă курнă "Свияга" холодильник сутатпăр. 5-27-30 номерлĕ телефонпа 17 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*

## Çĕнтерӳ кунне халалласа

С
П
О
Р
Т

Май - çутă та асран кайман уявсен уйăхĕ, вĕсем пиртен кашнин чĕрине çывăх. Вĕсем хушшинче Çĕнтерӳ кунĕ уйрăмах паллă, вăл пире мир тата ирĕклĕх илсе килнĕ. Вăрçă çинчен аса илӳ нихăçан та пĕтмест тата вăл питĕ сăваплă.

Пирĕн хула тата район спортсменĕсем, çав шутра шахматистсем те уява лайăх кăмăлтуйăмпа кĕтсе илчĕç.

Хулари стадиона тирпей-илем кĕртнĕ. Кунта тĕрлĕ йышши спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Шахматла хăвăрт выляс тĕлĕшпе ирттернĕ ăмăрту та уява илемлетрĕ. Вăл виçĕ сехет ытла пычĕ. Çивĕч ăмăртура пĕрремĕш вырăна районти "Надежда" производство управленийĕнче ĕçлекен А.С.Леваков, иккĕмĕшне - Н.Ш.Фатыхов (НГДУ), виççĕмĕшне А.З.Гильманов (НУРБ) йышăнчĕç. Вĕсене пурне те асăнмалăх сувенирсем пачĕç. Турнира район администрацийĕ çумĕнчи спорт комитечĕ йĕркеленĕччĕ.

**А.КОСТИН,**
**ăмăрту судйи.**







## ПИРĔН ПАТА ÇЫРАÇÇĔ

*Вулакан ыйтать*

### Сĕт... датăсăр

**Хисеплĕ редакци!**

**Эпĕ Нурлатра пурăнатăп, мана çакăн пек ыйту кăсăклантарать. Магазинсенчи сĕт продукчĕсем - сĕт, хăйма, тăпăрчă, кефир тата ыттисем мĕншĕн хăш-пĕр чухне хăçан туса кăларнине палăртнисĕр сутăнаççĕ? Сĕтпе кефира кĕленче савăтсене тултарнă чухне вĕсен хупписем çине хăçан туса хатĕрленине вулама пулатчĕ. Сутуçăсенчен тĕрĕс хурав илтес çук, вĕсен яланах пĕр хурав:"Пурне те тин кăна илсе килнĕ..."**

**Сирĕн хаçатăра яланах çырăнса илекен тата вулакан К.Савельева.**

Редакци Нурлатри сĕт-çу комбинатĕнчен акă мĕнле хурав илчĕ.

Сĕт-çу комбинатĕнче ĕçлесе хатĕрленĕ тата Нурлат хулинче сутакан мĕнпур продукцие правилăсемпе палăртнипе килĕшӳллĕн паллă тăваççĕ.

Сĕт, кефир, катык, хăйма яракан полиэтилен пакетсенче, тăпăрчă чĕркекен пергамент, çу чĕркекен фольга çинче сăрăпа çакăн пек паллăсем пур:

- туса хатĕрлекен завод ячĕ;
- туса хатĕрлекен завод адресĕ;
- мĕнле продукци пулни;
- сортне палăртни;
- продукци виçи;
- чăн-чăн стандарт палăртни;
- 100 грамм продуктăн пахалăхне палăртни;
- сертификациленине пĕлтерни.

Унсăр пуçне, продукцие хăçан хатĕрлесе кăларнă уйăхне тата кунне кашни чĕркем çине автомат паллă тăвать. Ăна кашни чĕркемĕн хыçал енне палăртаççĕ. Анчах та Ижевскри механика завочĕ туса кăларакан сĕтçу продукчĕсене чĕркекен автоматсем йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ, çавăнпа та цифрăсем питĕ пĕчĕккĕ тата вĕсем аран-аран курăнаççĕ. Çавна тĕпе хурса эпир лайăхрах палăртакан хушма оборудовани тума заказ патăмăр.

*Вулакан пăшăрханать*

### Хăçан йĕрке пулĕ-ши?

**Эпир, Школьная урамĕнчи 26-мĕш номерлĕ çуртра пурăнакансем, хамăрăн нуша çинчен пĕлтерес терĕмĕр. Çак çуртра эпир пиллĕкмĕш çул пурăнатпăр ĕнтĕ. Анчах кунта çутçанталăк газĕ халĕ те кĕртмен-ха, çулсерен шантараççĕ пулин те. Чи хăрушши вăл - путвалта çулталăк тăршшĕпех 1,5-2 метр тарăнăш шăршлă шыв тăни. Çак çурта мĕнле йышăннă? Вăрăм тунасем, ӳпре-шăнасем, йĕпе кăшанкăсем питĕ тарăхтараççĕ...**

**Сидорова, Магусева тата ултă çын алă пуснă.**

Ку çырăва пăхса тухма тата мерăсем йышăнма редакци кирлĕ органсене ярса панăччĕ. Кайран вара эпир район тата хула администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Р.Г.Билалов алă пуснă çакăн пек çыру илтĕмĕр:

"Школьная урамĕнчи 26-мĕш номерлĕ çуртра пурăнакансен çырăвĕ пирки çапла пĕлтеретĕп, Нурлатри аш-какай комбиначĕ ку путвала тасатнă, канализацие тĕпрен юсанă, газ кĕртнĕ".

*Шухăш*

## Çуркуннехи сунар - çылăх

Уйрăмах кăçалхи, кăткăс çанталăклă çуркунне вĕçсе килекен кайăксемшĕн йывăр. Пирĕн енчи кайăксем вĕçсе килнĕренпе темиçе эрне иртнĕ пулин те, хурсене, кăвакалсене хăйсем валли йăва тума вырăн тупма питĕ йывăр. Çапла майпа, шыв кайăкĕсен шучĕ чакма пултарать.

Опытлă ухатниксем, çутçанталăка юратакансем çуркунне çăмарта тăвакан кайăксене пени çылăх тесе шутлаççĕ. Чылай çĕршывсенче çуркуннехи сунар çук, мĕншĕн тесен вĕçсе килнĕ чух кайăксен йышĕн çурри вилет. Çавăнпа та ман шухăшпа çуркунне вĕçсе килекен кайăксене пемелле мар.

**А.ХАНИПОВ,**
**сунарçă.**


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.



**Аксеновăн Бизнес Шкулĕн Хусанти филиалĕ**

**DOS, Nopton, Windows 95, MS Office 97, Word, Excel, Ic бухгалтери компьютер курсне вĕренме йышăнать. Компьютерпа усă курма вĕрентме 10-14 çулхи ачасен ушкăнне пуçтарасси çинчен пĕлтерет.**

**Кăмăл пуррисем хăйсен ĕçĕсем, компьютер вăййисем тата ытти валли вăхăт уйăраççĕ. Ĕç вырăнне ПЭВМ Pentium 166 MMX, СДпа оборудованиленĕ.**

**А4 форматпа хура-шурă ксерокопи тумалли услугăсем паратпăр (пĕр йĕрке 70 пус).**

**Сире эпир 10 сехетрен пуçласа 20 сехетчен кĕтетпĕр!**

**Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, "Йăла çурчĕ", 2-мĕш хут. Телефон: 5-37-51.**

**Аксеновăн Бизнес Шкулĕн Хусанти филиалĕ**

**Бухгалтер-экономист, бизнес йĕркелекен ăстаçă специальноçсене вĕренме йышăнать.**

**Студентсене пĕлсе тăма - консультаци ыйтăвĕсемпе 10.00 сехетрен пуçласа 13.00 сехетчен пыма пулать. Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, "Йăла çурчĕ", 2-мĕш хут. Телефон: 5-37-51.**



Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информацине пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860.